# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

50 (8617) № * *Юнкун, утă (июль) уйăхĕн 11-мĕшĕ* * *Хакĕ ирĕклĕ*


«Симĕç ĕç çи – 2018»

# Улăх-çаранта – малашлăх ĕмĕтпе




***Пĕрлехи ĕçпе утă уйăхĕн 9-мĕшĕ тĕлне «Путь Ильича» агрофирмăра 1300 тонна (37,1 процент) сенаж янтăланăччĕ ĕнтĕ. Сенаж çинчи пекех, утă хатĕрлеме йĕркеленĕ механизациленĕ бригада та паян агрофирмăра пĕр тикĕссĕн ĕçлет. Кĕске вăхăтрах вĕсем 170 тоннăна яхăн (42,5 процент) типĕ утăна ферма çывăхне турттарса çивитти айне хума пултарчĕç. Улăх-çаранта уяр кунăн кашни минучĕпе туллин усă курса ĕçлекенсем нумай çул тата пĕр çул ӳсекен курăксен лаптăкĕсем пуррине шута илсе, ку кăтарту çывăх кунсенче палăрмаллах ӳсессе пĕлтерчĕç. «Паян паха вăхăта çухатманни – хĕл хырăмĕ тутă пуласса, продукци ытларах илсе хуçалăх экономикине тĕреклетессе», – кăмăллăн ăнлантарчĕ курăк çулакансемпе ирттернĕ калаçура ĕç тăвакан директор çумĕ Юрий Волков (сăн ӳкерчĕкре сылтăмра). Унпа пĕрле хиртен сенаж турттаракан Александр Коротков водительпе Виталий Иванов механизатора (сулахайран сылтăмалла) куратăр. Вĕсем те умри тĕллевсене хăвăрт пурнăçлас ĕмĕтлĕ. Çакна 1200-шер тонна кĕрекен иккĕмĕш траншея сенажпа тулса пыни те çирĕплетет.***

**(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)**

Республикăра

# Шупашкарта Сабантуй кĕрлерĕ

**Июлĕн 7-мĕшĕнче Чăваш Республикин тĕп хулинче Сабантуй кĕрленĕ. Мероприяти федераци шайĕнче иртнĕ.**

Уява пухăннисене Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев тата Тутар Республикин Президенчĕ Р. Минниханов саламланă.

Пирĕн тăрăхра иртнĕ Сабантуя 41 регионтан килсе çитнĕ. М. Игнатьев хăйĕн салам сăмахĕнче чăваш çĕрĕ çине хăнасем килме кăмăл туни çав тери пысăк хисеп тесе пĕлтернĕ. Федераци шайĕнчи Сабантуй хăватлă уяв, пĕр-пĕрне пĕрлештерекен, пĕр чăмăра пухакан мероприяти тесе каланă.

Р. Минниханов çакăн пек чаплă мероприяти йĕркеленĕшĕн чи малтан регион ертӳçине ырласа тав сăмахĕ каланă. Йĕркелӳçĕсене çак мероприятие çӳллĕ шайра иртттернĕшĕн чун-чĕререн мухтаса тав тунă.

Сăмах май, Чăваш Республикинче 34 пин ытла тутар çынни пурăнать. Тутарстанра вара – 116 пин ытла чăваш.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев çав кун Тутар Республикин Президенчĕпе Р. Миннихановпа ĕçлĕ тĕл пулу йĕркеленĕ.

Икĕ ертӳçĕ «Экра» НПП пĕрлешӳ ĕçĕпе те паллашнă.

Сабантуйра Муркаш районĕнчи пултарулăх ушкăнĕсем те хăйсен юрри-ташшипе савăнтарнă. Уява Москакасси Культура çуртĕ çумĕнчи «Шуçăм» ансамблĕн ташă коллективĕ, Ярапайкассинчи Культура çуртĕ çумĕнчи «Екрем» халăх фольклор ушкăнĕ тата Атапай клубĕ çумĕнчи «Сурпан» вокал ансамблĕ хутшăннă.

**Хамăр инф.**

Ĕçлĕ çул çӳрев

# Муркашсем вырмана хатĕрленеççĕ

**Иртнĕ эрнере Муркаш районĕнче Чăваш Енри патшалăх техника надзорĕн пуçлăхĕ Сергей Вязовский ĕçлĕ çул çӳревпе пулнă.**

Патшалăх тĕп инженер-инспекторĕ чи малтанах район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕпе Андрей Мироновпа тĕл пулса кулленхи ыйтусене сӳтсе явнă, хĕлле валли вырăх апачĕ хатĕрлессипе, вырмана хутшăнма хатĕрлекен техника пахалăхĕпе кăсăкланнă.

Вырмана хутшăнма хатĕрлекен техникăпа Сергей Вязовский вырăна тухса та паллашнă. Çавна май район администрацийĕн экономика тата АПК аталанăвĕн пайĕн ертсе пыракан специалисчĕпе Валентина Ивановăпа тата патшалăх техника надзорĕн Муркаш районĕнчи аслă инспекторĕпе Сергей Николаевпа пĕрле вăл «Герой», «Свобода» производство кооперативĕсенче, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра пулса курнă.

Техникăпа паллашнă май, Сергей Вязовский хăвăрт иртттермелли вырма тапхăрĕнче кашни техника юсавлă пулни пысăк пĕлтерĕшлине палăртса каланă. Тĕп инженер-инспектор вырма вăхăтĕнче ĕç сывлăх йĕркине çирĕп пăхăнмаллине те асăрхаттарса хăварнă.

Хуçалăхсенче пулса курнă хыççăн Сергей Вязовский муркашсем вырмана тĕллевлĕ хатĕрленнине, техникăпа ăста специалистсем ĕçленине палăртнă.

**Хамăр инф.**

Районта

# Ялсем хăтлăрах пулаççĕ

Муркаш районĕнче пуçарулăх бюджечĕн программипе çынсен шухăш-кăмăлне шута илсе пурнăçланипе хута яма май килнĕ объектсем хушăнсах пыраççĕ.

Иртнĕ эрнере акă Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Анатри Панкли ялĕнче ача-пăча вылямалли площадкăна савăнăçлă лару-тăрура уçрĕç. Унччен маларах çакна майлă площадкăсем Чуманкасси тата Çатракасси ял тăрăхĕсенче ĕçлеме тытăнчĕç.

Район администрацийĕнчен палăртнă тăрăх, асăннă программăпа кăçал район территорийĕнче 5 ача-пăча площадки тата юсанă 14 çул хута каймалла.

# 90 çул тултарчĕ

Пирĕн районта та 90 çула çитекенсем сахал марри кăмăла хăпартать: сывă пурнăç йĕркине тытса пырса нумай çул пурăнма тăрăшма ырă тĕслĕх пур.

Иртнĕ эрнере Мăн Токшик ялĕнчи Ольга Яхеевăна та Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Евгений Орлов тата вырăнти культура ĕçченĕсем 90 çулхи юбилейпа саламланă. Вĕсем Ольга Романовнăна паянхи çамрăксен ырлăхĕшĕн ырми-канми тăрăшнăшăн, ачисене тивĕçлĕ воспитани панăшăн тав тунă. Сăнĕпе те чылай çамрăкрах курăнакан юбиляра вăрăм кунçул суннă.

Çамрăклăхĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтне лекнĕрен, хура-шурне сахал мар курма тивнĕ унăн. Пурнăç тăршшĕпе нумай йывăрлăха çĕнтернĕ, тӳссе ирттернĕ ветеран паян ачисемпе, мăнукĕсемпе тата кĕçĕн мăнукĕсемпе савăнса пурăнать.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Пĕлме

# Тивĕçтермерĕç пулсан

Чăваш Республикин Юстици тата пурлăх хутшăнăвĕсен министерствинче юридици компанийĕсем юридици услугисемпе пахалăхлă тивĕçтерменнин ыйтăвĕсемпе «хĕрӳ лини» йĕркеленĕ.

Çавна май юридици компанийĕсенче услугăсемпе тивĕçтернĕ чухне суйнă, улталанă е ытти фактпа тĕл пулсан, кирек кам та 8(8352)64-20-72 номерпе шăнкăравлама пултарать. Информацие çак номерпе ĕç кунĕсенче шăнкăравласа е minust@cap.ru, minust2@cap.ru электрон адрессем çине хыпар ярса пĕлтерме пулать.

**Хамăр инф.**

Çырăнтару – 2018

# Хаçат çырăнма васкăр

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата август уйăхĕнчен илсе тăма çырăнтараççĕ. Кĕрхи-хĕллехи кăссенче райхаçата вулас тесен, почтальонпа тĕл пулма васкăр.**

**Район хаçатне альтернатива мелĕпе çырăнас текенсен хаçат редакцине паспортпа килмелле.**

**Саламлатпăр**



Пирĕн хаклă та хисеплĕ аттепе аннене – Турай ял тăрăхĕнчи Анаткасси ялĕнче пурăнакан **Лениана Александровнăпа Николай Егорович ЕГОРОВСЕНЕ** сумлă юбилейпа – пĕрлешнĕренпе 60 ҫул ҫитнĕ ятпа чун-чĕререн тухакан мĕнпур ырă туйăмсемпе саламлатпăр. Ĕмĕрĕ вĕсен ĕҫсĕр иртмен, иккĕшĕ те ĕҫ ветеранĕ. Вĕсем шкулта 40-шер ытла ҫул вăй хурса тивĕҫлĕ канăва тухнă. Ĕмĕрӳ сирĕн юхан шыв пек вăрăм, сывлăхăр чăваш юманĕ пек ҫирĕп, килекен кашни куна хавасла кăмăлпа кĕтсе илмелле пултăр. Сире иксĕмлĕ телей сунатпăр. Пире, ачисене, ӳстерсе пурнăҫ ҫулĕ ҫине тухма вăй-халне шеллемесĕр тăрăшнăшăн, яланах ăс парса вĕрентсе пынăшăн ҫĕре ҫити пуҫ таятпăр. Кĕрекӳ сирĕн яланах ачусемпе, тăванусемпе пуян пултăр. Яланах ачусен, мăнуксен, кĕҫĕн мăнуксен хаваслă сассине илтсе, ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Эпир сире юрататпăр, эсир пурришĕн савăнатпăр, тавах сире пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕҫĕн мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Пирĕн юратнă та хисеплĕ ҫыннăмăра – Турай ял тăрăхĕнчи Ҫатракасси ялĕнче пурăнакан **Елена Филимоновна ДМИТРИЕВĂНА** илемлĕ юбилейпа ăшшăн саламлатпăр.



Юман пек ҫирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-ҫул, ҫăлкуҫ пек тапса тăракан вăй-хал, хĕвел ăшши пек ăшă кăмăл, хуйхă-суйхăсăр пурăнма ҫутă ăраскал сунатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕ, икĕ хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, Кузеевсен, Ванюшкинсен, Грачевсен ҫемйисем тата ҫывăх тăванĕсем.**

Юратнă мăшăра, аннене, хисеплĕ тăванăмăра – Отарккă ялĕнче пурăнакан **Любовь Леонидовна ВАСИЛЬЕВĂНА** илемлĕ те сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.



Хурçă пек ҫирĕп сывлăх, инçе ҫул пек вăрăм ĕмĕр, телей те ăнăçу сунатпăр. Пурнăҫри кашни утăму ырлăхпа, юратупа, ҫутă ĕмĕтсемпе тултăр. Яланах хаваслă та ырă, чунупа ҫамрăк пул, чир-чĕр мĕнне пĕлмесĕр тăван кил ăшшине упраса нумай ҫул пурăнмалла пултăр санăн. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕ, ҫывăх тăванĕсем, хăтипе тăхлачи.**

**Июль ҫĕнĕлĕхĕсем**

## «Мир» карттăпа

Июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса бюджетниксем ĕҫ укҫине тата ытти тӳлеве «Мир» наци тӳлев карттипе кăна илсе тăма пуҫлаççĕ е укҫа-тенкĕне нимĕнле карттăпа ҫыхăнман счет ҫине кăна куҫарса параççĕ. Федерацин 161-ФЗ номерлĕ Саккунĕн 30.5 статйипе килĕшӳллĕн, 2020 ҫулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне пенсионерсем те укҫа-тенкĕне «Мир» карттăпа илме пуҫăнмалла. Анчах та вĕсем карттăпа тӳлевсĕрех усă курĕç.

**Пирĕн календарь**

## Полтава патĕнчи ҫĕнтерӳ

Июлĕн 10-мĕшĕ – Раççей ҫар мухтавĕн кунĕ. Ҫав кун 1709 ҫулта Пĕрремĕш Петĕр патша ертсе пынипе вырăссен ҫарĕ Полтава патĕнчи ҫапăҫура шведсен ҫарне ҫапса аркатнă. «Паян, халĕ Тăван ҫĕршыв шăпи сирĕнтен килет», – тенĕ Пĕрремĕш Петĕр ҫар ҫыннисен умĕнче ҫапăҫу пуҫланас умĕн. Полководецсен ăсталăхне тата вырăс салтакĕсен хăюлăхĕпе паттăрлăхне курсах шведсем нумай тытăнса тăрайман.

**Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав**

# Чее тилĕ мыскари

Редакцие **Шомик ялĕнче пурăнакан Валерий Моисеев** кĕчĕ. Акă мĕнле истори каласа пачĕ вăл. Вăл каланине унăн сăмахĕсемпех ҫырса пĕлтерме кăмăл пур.

«Пĕррехинче май уйăхĕн вĕçĕнче канмалли кун ман пата ир-ирех пĕр предприятире электричество ҫукки пирки шăнкăравласа пĕлтерчĕç. Эпĕ вара автомашинăпа ҫула тухрăм.

Пыратăп ҫапла хайхискер ҫурхи кунпа киленсе. Урам хушшинче ăнсăртран чăмăркка хитре тилле курах кайрăм. Малтанах йытă тесе шухăшланăччĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, ҫакскер пĕрисен хуҫалăхĕ умĕнчи урамри хура чăхха ярса илчĕ те хуҫисем чылайранпа пурăнман кил хуҫалăхĕн картишне чăмрĕ.

Ҫынсем хăйсен ĕнисене касăва хăваласансем патне ҫитсен, чарăнса хам мĕн курни пирки каласа патăм. Ялта пурăнакансем хушшинче камăн хур-кăвакал, камăн чăхчĕп ҫухалнисем пайтах иккен.

Шутласа пăхрăм та, пирĕн урамра кун пек пушă ларакан кил хуҫалăхĕсем харăсах тăватă иккен. Пĕри теприне юнашарах вырнаçнă. Тĕрĕссипе хуҫисем пур, анчах та чылайранпа пурăнман пирки кил картишĕнчи сарайĕсем, хапхисем ишĕлсе анса пĕтнĕ. Темиçе ҫул ҫулманнипе картишĕсенче ҫумкурăк ашкăрать. Кун пек ҫĕрте вара тилĕ кăна мар, кашкăр та ирĕклĕнех пурăнма пултарать. Пирĕн ялта пурăнакансем хушшинче хальхи ирсерен урам тăрăх хур-кăвакала пĕве хĕрне хăвалакан та ҫук. Чăххи-чĕппине те урама кăларма шикленмелле. Тилĕ апачĕ пулать кăна.

Тилĕ чăх-чĕп тытни пĕр япала. Яла килекен кун пек тилĕсем чирлĕ те пулма пултараççĕ вĕт-ха. Апла пулсан килти выльăх-чĕрлĕх хушшинче чир-чĕр те сарăлма пултарать».

Валерий Моисеев вырăнта депутатсемпе старостăсем те, ытти яваплă ĕҫчен те пурри пирки калать. «Ниепле те йĕрке тума май ҫук-ши? Ҫавăн пек ишĕлчĕк кил-ҫурт ял хушшинче пулни килĕшӳллĕ-ши? Кун пек йĕркесĕрлĕхшĕн хуҫисенчен ҫирĕппрех ыйтма вăхăт мар-ши?» – тет вăл.

Тилĕ ыйтăвĕпе малтанах **сунар хуҫалăхĕн яваплă ĕҫченĕсемпе** калаçса пăхрăм. Яла пырса кĕнĕ тилĕ чăх-чĕп тытать-и, чирлĕ-и вăл – анчах та сунар правилисене, саккуна пăсма юрамасть иккен. Халĕ сунар сезонĕ мар вĕт-ха. Тилле тытма ятарлă ирĕк илес пулсан, министерство шайнех ҫитме тивет. Ҫитменнине тилле ял территорийĕнче тытма никам та ирĕк парас ҫук.

Ҫапах та **Катькас ял тăрăх администрацийĕн пуҫлăхĕпе Геннадий Лебедевпа** та тĕл пулса калаçса илес терĕм, ку тĕлĕшпе вырăнти лару-тăру пирки каласа пама ыйтрăм. Геннадий Герасимович ҫавна каласа пама кăмăл турĕ. Ял ҫыннисен ыйтăвне тивĕçтерсе тилĕсене тытассине йĕркелеме ирĕк илме район администрацийĕ урлă Чăваш Республикин Ҫут ҫанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствине ҫырупа тухма тивнĕ. 5 тилĕ тытма 5 кунлăха ирĕк панă. Ҫапла вара вырăнти сунарçăсене явăçтарса ирĕк панă кунсенче Кĕрекаç, Чурикасси ялĕсем ҫывăхĕнче шăпах 5 тилле персе пăрахнă. Ҫак ĕçе хутшăнакан сунарçăсене укçа-тенкĕ парса хавхалантарнă.

Ҫапах та Геннадий Герасимович ялсем тавраşĕнче кун пек пуҫтахланса кайнă тилĕ сем татах пурри пирки каларĕ. Ҫавна май кун пек ҫырупа ҫывăх вăхăтрах министерствăна татах тухасси ҫинчен пĕлтерчĕ. Апла ялти ҫынсен чăххи-чĕппи ҫухалма пăрахать пулĕ.

Ялсене пырса ҫӳрекен тилĕсем пирки сăмах пуҫарнă май, ҫак ыйтупа та интересленсе пăхас терĕм: калăпăр, тилĕпе куçа-куçăн пулас пулсан, ҫыннăн мĕн тумалла-ха, хăйне мĕнле тытмалла? Чирлĕ тилĕ ҫынна та ҫыртас хăрушлăх пур вĕт-ха. Ыйту ҫине компетентлă хурав илме **районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин пуҫлăхĕн ҫумĕпе Людмила Бояриновăпа** ҫыхăнтăм. Акă мĕн пĕлтерчĕ кун пирки Людмила Алексеевна. Тилле перĕнме кирлĕ мар, ăна хăратма, ачашлама, тăрантарма юрамасть. Сисмĕш-курмăш пулсан лайăхрах. Тилле курни пирки вара ҫийĕнчех вырăнти сунарçăсене е ял тăрăхне пĕлтерес пулать. Ҫавăн пекех Людмила Алексеевна килти выльăх-чĕрлĕхе каç-каç лайăх хупса усрамалли, вĕсене куç ытамĕнчен вĕçертме кирлĕ марри пирки каларĕ. Чăх-чĕпе ир-ирех урам хушшине кăларса ямасан та лайăхрах. Тĕрĕссипе урам хушшине пачах кăлармасан тĕрĕсрех те.

Редакцие пулнă май, В. Моисеев ялти пушă ларакан кил хуҫалăхĕсем пирки те асăнчĕ. Хуҫа пеккисем те пур пулмалла вĕсен. Анчах та ку кил-ҫуртра ҫыннисем пурăнман пирки вĕсем ишĕлсе лараççĕ, картишĕсенче ҫум курăкĕ ашкăрать. Кун пек ҫурт-йĕр ялта пушар тухас хăрушлăхпа та ҫыхăннă.

Ку ыйтупа та ĕçлени пирки каларĕ ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ. «Халăх инвентаризацийĕн» мероприятийĕсене туса иртнĕ май, кун пек кил хуҫалăхĕсене хуҫасăррисен шутне кĕртме ниепле те май килмест. Мĕншĕн тесен вĕсен официаллă хуҫисем пур. Вĕсем пурте харпăрлăхра. Ҫавăнпа та Геннадий Герасимович комисси йĕркелесе тата пушарнăйĕсене чĕнсе ялсем тăрăх ҫӳресси пирки хыпарларĕ. Хăйсен харпăрлăхĕнчи кил-ҫурт тавраşĕнче санитари нормисене пăхăнманнисене тата пушар тухасран асăрханмалли правилăсене пăсакансене административлă майпа явап тыттарма лекĕ. Апла пулсан ял урамĕсенче йĕрке пулмалла пек туйăнать.

**«Тӳрĕ ыйту – тӳрĕ хурав» телефонĕсем: 62-2-82, 8-927-857-42-06.**

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

**Ҫулсем тата ҫынсем**

# Ырă ят – ĕмĕрлĕх



Врачсене ҫĕр ҫинчи чи ҫынлăхлă професси ҫыннисем теççĕ. Ку чăнахах ҫапла ĕнтĕ. Ҫынна сывлăх, пурнăç парнелессинчен, вилĕм аллинчен хăтарассинчен сумлăраххи те пĕлтерĕшлĕреххи урăх мĕн пултăр-ха тата? Пирĕншĕн вара пурнăçран хаклăраххи урăх нимĕн те ҫук ҫĕр ҫинче. Шурă халатлисен вара хăйсен пулăшу кĕтекене медицина инструменчĕпе е эмелпе кăна та мар, ытларах чухне чĕре ăшшипе те, ăшă сăмахпа та сиплеме тивет. Ҫавăн пеккисенчен пĕри пирки каласа парасшăн та.

Леонид Андреева районта пĕлмен ҫын сахал пулĕ. 1954 ҫулта Шупашкар районĕнче ҫуралнăскер, пирĕн районта тымар ярса тĕпленнĕ, 40 ҫул ĕнтĕ районти тĕп больницăра хирург-травматологра тăрăшать.

Шкул ачи чухнех тухтăр пулас шухăш пулни пирки калать. Ҫавăнпа та 1971 ҫулта ялти шкултан вĕренсе тухсан ăçта вĕренме каймалла-ши тесе нумай шухăшласа пуҫ ватман, тӳрех И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетне ҫул тытнă. Кайран вара аслă пĕлӳ илнĕ ҫамрăк специалиста ĕçлеме направленипе Муркаш районне янă. Ҫавăнтанпах тăрăшать вăл Муркаш район тĕп больницинче.

Ĕнерхи студент пуҫласа Муркаш тăрăхĕпе епле паллашни халĕ те унăн асĕнче:

– Мана направленипе ĕçлеме кайма икĕ вырăн сĕннĕччĕ. Пĕри – Çĕнĕ Шупашкар хулинчи больницăна, тепри – Муркаш больницине. Унччен Муркашра ятарласах пулса курман пулин те, эпĕ Муркаша суйласа илтĕм. Больница капмар хăтлă ҫуртра вырнаçнă пулĕ тенĕччĕ. Эпĕ килнĕ чухне вара хальхи больница ҫуртĕн пĕрремĕш хутне кăна купаласа пĕтеретчĕç-ха, – каласа парать вăл.

Ҫавăнтанпах Муркаш тăрăхĕнче. Мăшăрланса ҫемье ҫаварнă. Хĕрпе ывăл пăхса ӳстерсе пурнăç ҫулĕ ҫине кăларнă.

Малтанах хирург тивĕçĕсене пурнăçланă. Вăл вăхăтра больницăра хирургсем Иван Воробьевпа иккĕшĕ анчах пулнă. Каярахпа вара травматолог пулманнине кура 2 ҫул хушши клиника ординатурине вĕренсе пĕтерсе травматолог специальноçне те алла илнĕ, хирург-травматолог пулса тăнă. Сăмах май, икĕ специальноçĕпе те аслă категорие хӳтĕленĕ. 1990 ҫулта неврохирурги специальноçне те вĕренсе тухнă.

Хĕрĕх ҫул хушши сывлăх хуралĕнче тăрăшасси, ҫынсен сывлăхне сиплесси ҫăмăлах мар пулĕ. Нумай чухне тата ҫирĕплетнĕ кун йĕркипе кăна ĕçлеме май килмест вĕт-ха. Каçхи дежурствăсене те каяс пулать. Ҫĕрлехи вăхăтра ĕçе васкавлă чĕнсе илнисем сахал пулнă-ши тата? Ҫакă федераци трасси пирĕн район территорийĕпе иртнипе те ҫыхăннă. Пысăк ҫул ҫинче инкек-синкексĕр пулмасть. Инкеке лекнĕ ҫынна вара васкавлă пулăшу парас пулать. Тепĕр чухне кашни сехечĕ кăна мар, минучĕ те шутра. Хĕрĕх ҫул хушшинче мĕн чухлĕ пулнă-ши кун пекки?

Леонид Николаевичăн пушă вăхăт ҫитсех пымасть пулĕ. Апла пулин те вăл район пурнăçĕнче те активлăхпа палăрса тăрать. Ҫавна кура ĕнтĕ ăна вырăнта пурăнакансем тăватă созывра депутатсен район Пухăвĕн депутатне суйланă. Хăйĕн тĕп ĕçне пурнăçланипе пĕрлех ҫак числă ĕçе те тивĕçлипе туса пынă вăл.

Леонид Андреев – сывă пурнăç йĕркине тытса пыракан ҫын. Ҫакă кашни ҫыннăн пурнăçĕнче тĕп вырăнта пулмаллине вăл сăмахпа кăна мар, хăйĕн тĕслĕхĕпе те питĕ лайăх ҫирĕплетсе парать. «Тухтăрăн ҫапла пулмалла та», – тет вăл кун пирки. Йĕлтĕрпе туслă, ăмăртусене те хутшăнать. Ҫуллахи кунсенче вара шыва ишме кăмăллать. «Шел пулин те, район центрĕнче пурăнакансен валли ҫуллахи шăрăх кунсенче шыва кĕрсе киленме ятарласа хатĕрлесе панă вырăнсем ҫукрах», – тет.

Маттур тухтăр пирки сăмах пуçарнă май, унăн тепĕр "чун апачĕ" пирки асăнмасан хайлав тулли пулаймĕччĕ. Леонид Николаевич – районти шашка ваййин хастарĕсенчен пĕри. Шашкăлла выляса район хаçачĕн кубокĕсене çĕнсе илессишĕн ҫуллен иртерекен ăмăртусене тăтăшах хутшăнать. Шашкăлла шкул ҫулĕсенчех выляма маçтăр пулнă. Халĕ те пăрахман ăна. Шухăшласа кăна пăхăр: шашкăлла выляссипе 19 хутчен район чемпионĕ пулнă, республика шайĕнче те призерсен шутне пĕрре кăна мар лекнĕ, спорт маçтăрĕн кандидачĕн нормативне пурнăçланă.

Мул – виç кунлăх, ят-сум – ĕмĕрлĕх, теççĕ. Тухтăрăн тава тивĕçлĕ ĕçĕ асăрхамасăр юлман. Леонид Андреев – Раççей Федерацийĕн сывлăх сыхлав ĕçĕн отличникĕ. 2004 ҫулта вара «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ» хисеплĕ ята тивĕçне пултарнă. 2014 ҫулта ăна республика Пуҫлăхĕн указĕпе Чăваш Республикин Хисеп грамотипе наградăланă.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

«Симĕç ĕç çи – 2018»

# Улăх-çаранта – малашлăх ĕмĕтпе



(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Сенаж янтăланă çĕрте ăна хывас технологие çирĕп пăхăнни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакна хиртен килнĕ ешĕл массăна пусăрăнтарса тăракан Николай Охаринпа Сергей Парфенов механизаторсем **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре)** ăнланса ĕçлени сисĕнчĕ.

Ĕнен сĕчĕ чĕлхи çинче тенине шутласан, «симĕс ĕç çири» хастарсен производство кăтартăвĕсем малашне те пĕчĕк пулмасса шанма пулать. Çакна валли хуçалăх кĕске вăхăтрах утăн пысăк пайне янтăланă. Вĕсене рулонсене пухса кĕске хушăрах ферма çывăхĕнчи çивитти айне турттарса хума та ĕлкĕрнĕ. Утă пахалăхĕ ăна епле хатĕрленинчен килет. Кунта вара Валерий Степанов **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)** пĕр минут та ĕçе чарса тăмасть.

– Утă янтăлатпăр-и е сенаж хыватпăр – хушнă ĕçе вăхăтра пурнăçламалла. Çавăнпа та ĕç фронтне ăçта парасçĕ – яра куна çавăнта ирттеретĕп, – кăмăллăн сăмахларĕ Валерий Алексеевич. Хуçалăхра водительте 38 çул вăй хураканскер, ĕç стажне слесарьтен пуçланă. Çавăнпа та хăйне шанса панă техникăна вăл çирĕп алăра тытать. «Техника юсавсăр, ĕçе тухаймастăп», – тени пулман унăн. Çавăнпа та ăна ĕçре те, хуçалăхра та хисеплесçĕ, чи ответлă вырăнсене шанса парасçĕ. Утă типĕтнĕ çĕрте çавăн пекех А. Александров, С. Парфенов, Ю. Ильин хастар.

Типĕ утă та, паха сенаж та фермăна пĕчĕн-иккĕн ĕçленипе кĕмест. «Путь Ильича» агрофирмăра та çак ĕçе механизациленĕ бригадăсем пурнăçласçĕ. Уяр кунсемпе туллин усă курса çитес хĕл валли выльăх апачĕ ытлă-çитлĕ янтăласси çĕр ĕçченĕн паянхи тĕп тĕллевĕ пулнине ăнланса, хорнуйсемпе шаптаксем паян куллен ĕçе васкаççĕ. Агрофирмăра пулнă май, ӳсен-тăранпа выльăх-чĕрлĕх отраслĕ тачă çыхăнура пулни кашни утăмрах палăрчĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



Çемье

# Вĕсем – çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх

Чăваш Ен Правительстви социаллă сфера, сывлăх сыхлавĕ, вĕренӳ, пурăнмалли çурт-йĕр тăвасси çине пысăк тимлĕх уйăрать. Çавна май патшалăхăн тĕрлĕ программи ĕçлет. Вĕсене йăлтах çемьесене тĕрев парас, вĕсен ăнăçлăхне ӳстерес, ачалăхпа амăшлăха сыхлас, çемье ырă йăли-йĕркине упрас тĕллевпе йĕркеленĕ.

Раççей шайĕнче те демографи политикинчи ыйтусене татса парассипе пысăк ĕçсем пулса пыраççĕ. Ача çуралассине хавхалантарассипе пĕрремĕш ача çуралнăшăн тӳлев кĕртнĕ, амăш капиталĕн программине малалла тăснă, ипотека кредичĕн ятарлă программи вăйра.

Район администрацийĕ те пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвне татса парасси çине пысăк тимлĕх уйăрать. Иртнĕ çул 39 çемье хăйĕн пурнăç условине 30 миллион ытла тенкĕлĕх лайăхлатма пултарнă. Кăçал ку тĕлĕшпе 23,5 миллион тенкĕ уйăрма палăртнă. Çак укçаран 15 миллион тенкĕне яхăн 23 çамрăк çемье усă курма пултарĕ. Вăл шутран çак тапхăр тĕлне 20 çемье социаллă тӳлевпе усă курма ирĕк паракан свидетельствăна илнĕ.

Пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшу пурри аван, анчах çемьесен пурнăçри ытти пăтăрмаха та çĕнтерме пĕлмелле. Çавăнпа та çамрăк çемьесене ырă тĕслĕх кăтартакан хисеплĕ мăшăрсем тав сăмахне тивĕç. Сăн ӳкерчĕкри сумлă çынсем – вĕсен йышĕнче. Хисеплĕ çемье Раççей ят-сумне çĕклекен, Тăван çĕршыва хӳтĕлекен тата район аталанăвне пысăк тӳпе хывакан яш-кĕрĕм ӳстернĕ.




**Сăн ӳкерчĕкри** Орловсем «Юратупа шанчăклăхшăн» ордена тивĕçрĕç. Вĕсем Москакасси ял тăрăхĕнчен. Леонид Гавриловичпа Зинаида Владимировна 55 çул килĕштерсе пурăнаççĕ, 5 ачана пурнăç çулĕ çине тăратнă, халĕ вĕсен 5 мăнук тата кĕçĕн мăнук. Леонид Гаврилович ĕмĕр тăршшĕпех ял хуçалăхĕнче вăй хунă, ĕçри тăрăшулăхшăн медале тивĕçнĕ. Зинаида Владимировна чылай çул хушши «Передовик» хуçалăхра тăрăшнă. Çемье телейне вĕсем пĕр-пĕрне хисепленинче, ăнланнинче кураççĕ. Çамрăк мăшăрсемшĕн те вĕсен ырă сĕнĕвĕ яланах вырăнлă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Православи кĕтесĕ

# Ыран – Питрав

Питрав – Православи Чиркĕвĕн пысăк уявĕсенчен пĕри. Çимĕк хыççăн пуçласа Питравччен православи тĕнне ĕненекенсем типĕ тытаççĕ. Типĕ Петрпа Павел апостолсен уявĕпе пĕтет.

Хуларан хулана, çĕршывран çĕршыва куçса апостолсем Христос вĕрентĕвне сарса çӳренĕ, анчах та çак ырă ĕçпе Петрпа Павел апостолсем ытти апостолтан ытларах палăрса тăнă. Çавăнпа ĕнтĕ вĕсене хисеплесе çветтуй аттемĕрсем уйрăм уяв çирĕплетнĕ. Пур вуникĕ апостола харăсах хисеплесе уявланине вара Православи Чиркĕвĕ тепĕр кунне ирттерет.

Çветтуй Петр, пулăçă ывăлĕ пулнăскер, вуникĕ апостолтан – Иисус Христос вĕренекенĕсенчен – пĕри пулнă. Çуралнă чухне ăна Симон ят панă, анчах кайран Христосран вăл Киф ят илнĕ, арамей чĕлхинче «чул» тенине, тĕн тытассинче çирĕп пулнине пĕлтерет. Çак ята кайран грек чĕлхи çине куçарнă, грекла та Петр «чул» тенине пĕлтерет.

Евангелире каланă тăрăх, Петр Библире сăнласа панă чылай событие хутшăннă. Хăйĕн вĕрентекенне виçĕ хутчен те сутнă, хыççăн айăпне йышăнса шанчăклă çын пулнине çирĕплетсе панă, христианство чиркĕвне йĕркелекенĕ пулса тăнă.

Çветтуй Павел, çуралсан Савл ят илнĕскер, малтанах христианство тĕнне хирĕç каласнă. Вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă Иисус Христоспа тĕл пулнă хыççăн вăл Турра ĕненме тытăннă. Павел Христос вĕрентĕвне Пĕчĕк Ази, Балкан çурма утрав çинче сарнă. Вăл вуникĕ апостол йышне кĕмен. Çапах та Павел апостол каласа хăварнисене Çĕнĕ сăмаха кĕртнĕ.

Чиркӳ кĕнекисем çветтуй Петрпа Павел апостолсен вилĕмĕ нушаллă пулнине пĕлтересçĕ.

Çак кун пулăçсем çветтуй Петртан ăнăçлăх ыйтаççĕ.

Шалти ĕçсен пайĕнче

# Хӳтлĕхе урамра ан шыраччăр

**Июлĕн 9 – 19-мĕшĕсенче пирĕн районта «Подросток» оперативлă профилактика операцийĕн иккĕмĕш тапхăрĕ пырать.**

Паянхи куна çул çитменнисем хутшăннипе районта пулса иртнĕ 6 преступление регистрациленĕ. Вĕсем ытларах ют пурлăха вăрланипе çыхăннă.

Йĕркене пăснă тĕслĕхсем пĕтĕмĕшле тĕрлĕрен пулаççĕ, çавăнпа та палăртса хунă пысăк калăпăшлă ĕçе чăнах та пур енлĕн пурнăçлас тесен, мероприятие полицейскисемпе пĕрлех профилактика тытăмĕн ытти субъекчĕ те хутшăнма тивĕç.

Çак вăхăтра учетра тăракан ачасене, ашшĕ-амăш тивĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçламаннисене тĕрĕслетпĕр, хула тулашĕнчи лагерьсене те çитетпĕр. Тĕл пулусенче асăрхаттару калаçăвĕсем ирттеретпĕр.

Ашшĕ-амăшĕсем хăйсен тивĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçламаççĕ тени ачисене пурăнма йĕркеллĕ условисем туса паманнипе çыхăннă. Çемьесенче пулса темĕн тĕрлĕ ӳкерчĕк те курма тивет. Ашшĕ-амăшĕ эрех ăшне путнă, вĕсене ачисен шăпи кăсăклантармасть. Çак лару-тăрăва тӳсекенĕсем вара – пĕр айăпсăр ачасем. Ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхне туйман ача урамра тимлĕх шырать. Çавăнпа та тĕрлĕ сăлтава пула тӳрĕ çултан çăмăллăнах пăрăнма пултарать. Апла пулсан ачасене йĕркене пăсассинчен асăрхаттарасси пĕрлехи ĕç пулса тăрать.

**О. ЯКОВЛЕВ,**

**шалти ĕçсен пайĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен подразделени пуçлăхĕ.**

